к81Чув-920
Е74
Ч-47926

# Чăваш азбуки



Национальная библиотека ЧР
4-047926


Аа

Ăă

Бб


Ее

Ёё

Ĕĕ


Жж


Лл

Мм

Нн

Оо


Тт

Уу

Ӳӳ

Фф


Щщ
ъ

Ыы
ь

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| б | <br>Вв | <br>Гг | <br>Дд | |
| к | <br>Зз | <br>Ии | <br>Йй | <br>Кк |
| о | <br>Пп | <br>Рр | <br>Сс | <br>Çç |
| ф | <br>Хх | <br>Цц | <br>Чч | <br>Шш |
| | <br>Ээ | <br>Юю | <br>Яя | |

К814чув-920
Е74

А.А. ЕРМОШКИНА, Н.Н. ЧЕРНОВА

# Чăваш АЗБУКИ

Пуçламăш шкулăн 1-мĕш класĕ валли

Чăваш Республикин Вĕренӳ
тата çамрăксен политикин министерстви
шкулсенче усă курма сĕннĕ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2015

УДК 373.167.1
ББК 74.268.1Чув
Е 74

## Йышăннă паллăсем:

. — предложени

. — предложени тытăмне кĕрекен сăмахсем

— сăмах

— сыпăк чикки, сăмахри сыпăксен хисепĕ

— сасă

— уçă сасă

— хытă хупă сасă

— çемçе хупă сасă

— пусăм

— янракан хытă хупă сасă

— янракан çемçе хупă сасă

— вăрăммăн илтĕнекен хупă сасă

— малалла тата каялла вула


— Аннапа Раман


— ушкăнпа ĕçле

**Ермошкина А.А.**

Е 74 Чăваш азбуки: вĕренӳ пособийĕ. 1-мĕш класс / А.А. Ермошкина, Н.Н. Чернова. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015. — 143 с., ил.

ISBN 978-5-7670-2388-2

Вĕренӳ кĕнекине ФГОСпа килĕшӳллĕн çĕнетсе хатĕрленĕ.

УДК 373.167.1
ББК 74.268.1Чув

Национальная библиотека Чувашской Республики
4-47926

ISBN 978-5-7670-2388-2

© Ермошкина А.А., Чернова Н.Н., 2015
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2015

Проверено 16 МАР 2017








Чăваш
АЗБУКИ


ТЕТРАДЬ





?
































?


ШКУЛ


ЛАВККА


ПОЧТА













? .



?

? | ?



? ? | ? ? | ? ?



? | ? ?



? ? | ? ?



? ? | ? ? | ? ? ?



? ? | ? ? ?



? ? ?



? ? ?



? ? | ? ? ?



? ? | ? ? ?




















































































?

?







  




○|□○ ○|□○□ ○|□○□

а|– – а|– – – а|– а –



Ч-47926

А-а-а! А-а-а! А-а-а!

А-а-а-а!

Национальная библиотека
Чувашской Республики

# Уу





у|– – –



у|– – –



у|– –




У-у-у! У-у-у! У-у-у! У-у-у-у!

  

○|□○ ○|□○ ○□|□○

a|– a a|– a a –|– a

a ⁓⁓⁓ y ay ○⁓⁓⁓○



**А-у! А-у! А-у! А-у! А-у-у!**







○|□○ □○ ○□|□○

у|– а – у у–|– а

у ～～～ а уа ○～～～○



У-а! У-а! У-а! У-а! У-у-а!

у

  

# Нн



– у|– а н   а–|– а н   – у|– а н

а – н   ан

**ан**   а|у   а|у

у|а   ан



, ан!









**ун** у н|– – – а –|– у н

у ～～～ н ун

а|у ан

у|а ун



, ан ан!



На!

на



□○|□○

нă|–ă



Ну!

 ?

| | | | |
|---|---|---|---|
| ан | на | ă\|на | Ан\|на |
| ăн | нă | а\|на | ан\|нă |
| ун | ну | у\|на | ăн\|нă |



— Анна, уна.

Анна унанă.

у

  

# Лл



ал|–а ал|–ă– ал –ăл|л–

**ал**

 ?

| | | |
|---|---|---|
| ан | на | ал |
| ăн | нă | ăл |
| ун | ну | ул |



▭–▭. Унăн  ▭.

у х

  

# Х х



ух|–а–   –ух|–ă–   ху|–ах

ах

а|у   ал   ла   ан   на   ах

у|а   ул   лу   ун   ну   ух



— Анна, на .

— Ах, ▭ !

  

| | | |
|---|---|---|
| □○\|□○ | □○\|□○ | □○\|□○□ |
| ха\|–ă | хă\|–а | ху\|–ăн |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| □○<br>**ха** | ○⁀□<br>ах | □○<br>ха | а\|ха | ху\|на |
| | ăх | хă | у\|хă | ху\|нă |



— Аха, ! Анна, на хулă.

— ,  ан ▭. , хуна.

• • • • у • • х • • • • • • • • • •

  

# Мм



□○□   ○□|□○□   ○|□○□

–ум   ам|–а–   у|–ам

○~□
**ам**

ан   на   ал   ла   ах   ха   ам



— Ам! Ам! А-ам! Ула , ан.

Ула  аннă.



Му-у-у!



ма|– –|н а



мă|–ă–

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ам | ма | ул\|ма | ха\|ма | **ма** |
| ăм | мă | ма\|на | хă\|ма | |
| ум | му | мă\|нă | ху\|ма | |



— Анна, на хăма.
Анна хăма хунă.

у х

ал ам ан ах

ăл ăм ăн ăх

ул ум ун ух

а|на ан|нă ху|на ху|ла

ă|на ăн|нă ху|нă ху|лă







У-у-ух! У-у-ух! У-у-ух! Ух, Анна.

ла   ма   на   ха

лă   мă   нă   хă

лу   му   ну   ху

а|лă   у|ла   ул|ма

а|ла   ху|ла   хă|на

а|на   ху|лă   ăн|нă



— Ах, улма! Улма ăннă!

Алла — хăна.

— Анна, ан. Мана хăнала.

Анна аннă, Аллăна хăналанă.

— На, улма, Алла.

р • • • у • • х • • • • • • • • •





# Рр



–ă|–ă р  –у|р ă  –ă|р у

ар  ра  ар|ла  у|ра  нă|рă

ур  ру  ум|ра  ла|ру  ху|ра|ма



Умра хурама. Хурама ▭ хура нăрă. Нăрă мăнă. Унăн 6 ура.

— Хура нăрă, ан.

Хура нăрă аннă.



хур

| | | | |
|---|---|---|---|
| | ма | ху | ха |
| | ман | хум | хам |
| | мал | хул | хал |
| хур | мар | хур | хар |

ху⁓⁓⁓р хур □○⁓⁓⁓□

у|ра → у|ра́ → ура → урам



## Хулара

Умра хула. Алла, Раман хулара. Урамра халăх. Урам анлă.

р • • • у • • х • • • • • • • • •

| | | |
|---|---|---|
| ман | лар | у\|нăн |
| ар\|ман | мар | ма\|нăн |
| ар\|лан | мăр | ха\|мăн |
| а\|ран | хă\|мăр | ха\|мă\|рăн |




**лар**

ла — р    лар    

ар|ла → ар|ла́ → арла → арлан







## Мăрмăр

Умра хăмăр Мăрмăр. Унăн .
 ула, хура. Мăрмăр мăрланă.

3*



□○∿□
**хум**

| | | |
|---|---|---|
| ма\|на | ла\|ру | ха\|ма |
| ман | лар | хам |
| ху\|ра | ху\|лă | ху\|ма |
| хур | хул | хум |

ху〰〰м хум □○〰〰□

ху|ра → ху|ра́ → хура → хуран



## Анна

Анна арлама ларнă. Аран-аран арланă.
— Хулăн арланă. Ан хурлан, Анна, арлама хăнăхăн.

р • • • у • • х • • ш • • • • • • •

  

# Шш



□○|□○ □○|□○ □○|□○□

ша|–а шă|ш– шу|ру–

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| аш | ша | ăш | ла\|ша | шу\|хă |
| ăш | шă | ă\|шă | шă\|на | шу\|хăш |
| уш | шу | ă\|шăх | шă\|мă | шă\|рăх |

ă|шă → ắ|шă → ăшă → ăшăх



## Лаша

Аннан хура лаша.
Раманăн шурă лаша. Шурă лаша шухă.
Шăрăх. Хура лаша ăшăрханă.

| | | |
|---|---|---|
| шу\|рӑ | ху\|шӑ | ӑ\|шӑ |
| шур\|лӑх | хуш\|нӑ | ӑ\|шӑн |
| шӑл\|лӑм | хӑ\|мӑш | ӑш\|шӑн |
| шӑл\|нӑ | ха\|мӑр | мӑ\|шӑр |

ху|шӑ → хý|шӑ → хушӑ → хушӑк



**Урамра**

Анна ӑшшӑн хушнӑ:

— Шӑллӑм, хамӑр ума шӑл-ха.

Анна ларнӑ. Раман урам шӑлнӑ.

Анна шӑннӑ. Раман ӑшӑннӑ.

р • • • у • • х • • ш • • ы • • • •

# Ыы



ы|рă ыр|ла хыр
ы|ран шы|ра хыр|нă
ых|ра хы|рăм шыр|лан

ы|ра → ы|ра́ → ыра → ыраш



## Ырлăх

— Анна, ыхруна хур,  хыр.
Раман, хур шыра, — хушнă амăш.
Анна  хырнă.
Раман хур ширанă.



ы|ран ыр|хан ыр|лӑх

ы|раш ыл|маш хыр|лӑх

хыр

хыр хырнӑ



лар

лар ларнӑ



хур

хур хунӑ

Ырӑ  .

Шурӑ  .

Ула  .

Хура  .

Хӑмӑр  .

Хӑрах  .

Ӑшӑ  .

Хулӑн  .

 ?



Раман, лар.
Манӑн лар мӑнӑ.

Урамра хыр.
Алла,  хыр.

Манӑн шурӑ хур, унӑн хура хур.
Анна, ыхруна хур.

 ?




 ?

⇄

| | | |
|---|---|---|
| ала | ӑннӑ | ама |
| Алла | Анна | ана |
| ара | ӑшӑ | аха |
| алла | шӑл | хух |

# Вв









в а | л а –　　в ă | – ă р　　в у | – ă

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ав | ва | ав | вăл | вă\|рăм |
| ăв | вă | ав\|нă | хă\|вăл | вăр\|ман |
| ыв | вы | а\|ван | ы\|вăн | шă\|вар |



## Вăрман

Вăрман шавланă. Анна  шыранă.
Ануш ывăннă. Вăл ларнă.
— Ах, хырлăхра ырă шăршă!

| | | |
|---|---|---|
| лав | а\|вăр | ву\|ла |
| шав | хă\|ва | ву\|лав |
| шыв | хă\|ва\|лăх | вы\|рăн |



Аван вула. Хăва аван.
Шыв ăшăх мар, авă авăр.
Ыран, Анна, Раман, хăва авăр.

а в а н



а в а н

а в ă р



а в ă р



## Ан манăр

Хăвалăх. Аван вырăн.
Шыв ăшă. Вăл ăшăх мар.
— Авă авăр. Анна, Раман, ан манăр.
Шывра хăрушă.

| | | |
|---|---|---|
| ху\|рал | у\|лăм | ар\|ман |
| ху\|ран | у\|лăх | вăр\|ман |
| ху\|рăн | у\|рăх | ы\|раш |
| ху\|нар | у\|рам | хă\|мăш |




ху|на → ху|на́ → хуна → хунав



**Ан хăра!**

Раман урамра. Ула хур урамра.
— Раман, на хулă! Ан хăра, Раман.
Раман хăраман.

р с • • у • • х • • ш • • ы • • • •





# Сс



с ă|ма|в а р    с ы|р ă ш

ас    са    ăс    са|ва    сы|вă

ăс    сă    ăс|лă    сă|вă    сыв|лăх



? ≠ ă с / ă с

Анна, шыв ăс.
Вула-вула ăс хушăн.



**Асăрхан!**

Сахрун сысна усранă. Сысна самăр.
— Раман, сыснан вунă  .
Унăн асав шăл. Вăл усал. Асăрхан!

# Çç









| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ç ă\|– ă р | | ç у\|н а | | ç ы\|р у |
| аç | çа | уç | ы\|вăс | су\|ха |
| ăç | çă | уç\|лăх | ы\|вăç | çу\|ха |
| уç | çу | у\|çă | са\|ва | сыр\|лан |
| ыç | çы | у\|сă | çа\|ва | çыр\|ла |






## Саламлă çыру

Анна çыру çырнă. Маруçа ырлăх-сывлăх суннă. Салам çырнă. Çыру çырма хушнă. Маруç çыру вуланă. Вăл савăннă.

| | | |
|---|---|---|
| сар çу | су\|ран | сы\|хă |
| шăн çу | çу\|ран | çы\|хă |
| услам çу | çа\|ран | сă\|вăс |
| ... çу | çар\|ран | сă\|вăç |

Уçă сывлăш. Лар уçă. Шыв уçă.









## Савăнăç

Шурă сурăхăн шурă çăм. Хура сурăхăн хура çăм. Асламăш çăм арланă. Вара вăл алса çыхнă. Савăнăç. Аннан шурă алса, Раманăн хура алса.

# Пп






пă|лан пы|л – с – с пу|лă

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ап | па | ап\|па | пу\|лă | у\|па |
| ăп | пă | па\|лан | пу\|ра | ур\|па |
| уп | пу | пă\|лан | пу\|рăш | ça\|пă |



## Пулăшу

Ануш аппа улăхра пăру пăхнă. Павăл та улăха аннă. Вăл Ануш аппана пулăшнă. Ануш аппа Павăла ырланă.

| | | | |
|---|---|---|---|
| сып | пур | шап-шу\|ră | ... |
| сап | пыр | хуп-ху\|ра | ... |
| лăп | пыл | сап-са\|ră | ... |

пу|лă → пу́|лă → пулă → пулăш



## Пулăра

Павăл, Уçăп, Аннапа Раман пулăра.

— Анна аппа, авă шапа.

— Раман, лăплан. Пулăра шăп лармалла, шăллăм.

— Анна аппа, çупах!

Пулă аван хыпнă.

# Ии



  



– ӑ|р и  ш ӑ|ш и  п ӑ|ш и

| | | | |
|---|---|---|---|
| ир | ри | ир\|хи | ирхи сывлӑм |
| ил | ли | шӑ\|ши | шӑши ҫури |
| иш | ши | пӑ\|ри | пир ил |

 ?

 








пир

пар

пăр

пур

пыр






## Çулла

Çил лăпланнă. Ăшă çумăр çунă.

Ирхи çумăр вăраха пыман.

Çумăр хыççăн Мирунпа Ирина аппа çум çумланă.

  

ç — р | ç и     п а н  у л | м и     п и | ç и х | х и



≠

| | | | |
|---|---|---|---|
| хыр | выр | пыр | пыл |
| хир | вир | пир | пил |

Аван-и? Сывӑ-и? Сывах-ши?



## Пыл

Сарпи аппан пыл пур. Вӑл Рамана пылпа хӑналанӑ. Пыл сывлӑхшӑн усӑллӑ.

Сывлӑх вӑл — пурлӑх.

  

# Тт



ту|рат тă|ма|на ти|л–

ат та ут а|тă ты|рă

ит ти хут у|тă ти|ха

пит пă|та ту|та



## Шурă çăнăх

Тулă ăнса пулнă. Ăна вырса пуçтарнă. Арманта туларан шурă çăнăх тунă. Аннапа Раман савăннă.

а ӑ • в • • • • • • • и • к л м н • п

   

тӑр|на ӑ|тӑр нут|ри хӑн|тӑр

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ут | ту | тыт | ту\|рат | тӑп-тӑ\|рӑ | ... |
| ит | ти | тир | тур\|та | ҫап-ҫу\|тӑ | ... |
| ыт | ты | тав | ты\|мар | сап-са\|рӑ | ... |

ту|ра → ту|ра́ → тура → турат

 ?

тутӑр, саппун, тӑлӑп, ... — ҫи-пуҫ

тӑрна, тӑри, тӑмана, ... — ?

ӑтӑр, хӑнтӑр, ... — ?

сурӑх, сысна, ... — ?

р с ç т у • • х • • ш • • ы • • • •

# Кк

   

ка|ван    ки|ш–р    ку|пăс|та

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ак | ка | ак | у\|ка | ку\|ка\|çи |
| ик | ки | рак | ук\|çа | кук\|ка |
| | | сак | ка\|вăн | кук\|кук |



## Кăпăшка çăкăр

— Ырă кун пултăр, кукаçи.

— Сана та сывлăх сунатăп, мăнукăм. Кил-ха, кăпăшка çăкăрпа пăтă ларса çи.

— Кукаçи, çăкăрпа пăтă тутлă. Тавтапуç çăкăр-тăваршăн.







шу|рă кăм|па



кă|рăç



?

çил

çăл

çул







| | | | |
|---|---|---|---|
| кан | сак | ку\|шак | пă\|кă |
| кин | çак | ку\|рак | кăт\|кă |
| кил | çук | ку\|рăк | кур\|ка |
| кул | хак | ка\|рăк | кă\|ма\|ка |

ça|pa → ça|pá → çapa → çаран

çу|рă → çу|рắ → çурă → çурăк





Ку манăн кил.
Саша, кунта кил.

Маша саппун çак.
Çак саппуна ил.

ху|лă → ху́|лă → хулă → хулăн
ху|на → ху|на́ → хуна → хунар
а|вă → а́|вă → авă → авăр
су|ха → су|ха́ → суха → сухан

## Çăкăр

Хырăм выçмасăр
çăкăр ан тыт:
çăкăртан хакли çук.

Алă çумасăр
çăкăр ан тыт:
çăкăртан таси çук.
 хывмасăр
çăкăр ан тыт:
çăкăртан асли çук.



# Ээ





э|м—л



э р—ш м—н





э х

э п

Э л п и

Э н т и п

Э р х и п



| | | | |
|---|---|---|---|
| эр | эх | пир | Эл\|пи |
| эн | эс | э\|пир | Эн\|три |
| эк | эп | сир | Эр\|хип |
| эм | эп\|пин | э\|сир | Эн\|тип |
| эл | эк\|ран | э\|тап | Эл\|ла |

? эк пин | Эн хип
эп ран | Эр три



## Энтип

Энтип сыв мар выртнă. Вăл шăнса пăсăлнă. Ăна пăхма тухтăр пынă.

Тухтăр ăна урама тухма хушман. Вăл панă. сывалма пулăшнă.

Энтип сывалнă.

? **321** **34521** **2341**
**çук** **кăрăç** **ывăс**

**Сывă çын — çунатлă çын.**
**Сывлăхран хакли çук.**

# Ее



е [э] пу|ка|не к–|реп|ле т–|ве



? ?
е

шел
шевле
умне

[э]
е



е

и, е [э]

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ма | ме | шӑл | шав\|ла | У\|ри\|не |
| на | не | шел | шев\|ле | Ку\|ли\|не |

 ?

шă л
□○□
≠ = = =
□○□
шă л

Анна, урам шăл.
Манăн шăл шурă.



## Ирхине

Илемпи çывăрса тăнă, вырăнне пуçтарнă, питне çунă, шăлне тасатнă, тумланнă, апатланнă. Унтан вăл шкула тухса утнă.

Урамра Илемпи Аннана курнă.

Илемпипе Анна — тантăшсем.

 ?

| 3 2 1 | 3 2 1 | 3 2 1 |
|---|---|---|
| **сап** | **пиç** | **тух** |

   

к–|пе вит|ре к–|ре|çе у|пă|те

ат|те а|сат|те ум|не ин|ке
ан|не а|сан|не пат|не хул|лен

 

## Парне

Урине инке хăнара. Унăн пурин валли те парне пур. Манăн парне — пукане. Шăллăмăн — хитре витре.

— Тавтапуç, Урине инке!

и ⁓ рт   ирт   ○⁓□□

○⁓□□
**ирт**

| | | |
|---|---|---|
| ир | ил | алт |
| ирт | илт | алт\|нă |
| ирт\|тер | илт\|тĕр | урт\|нă |

ир → ирт → и́рт\|нĕ → иртнĕ



## Асатте

Манăн асатте ватă. Вăл ырă кăмăллă çын. Асатте вăрман ăсти пулнă. Эпир унпа кашни эрнерех вăрманта пулатпăр. Унта сывлăш уçă, сывлама çăмăл.

?

**12354**
**çăмха**

**12543**
**сунар**

**12543**
**сухăр**

а ӑ • в • • е • ĕ • • и • к л м н • п

# Ĕĕ









лĕ|пĕш   –ĕ|пĕ   ки|мĕ



? ?

ĕ

ĕшне

тĕрĕ

ĕ

и, е[э], ĕ



## Ĕне

Пирĕн ĕне ула. Унӑн пӑрушĕ те ула.
Анне пире ӑшӑ сĕт ĕҫтерет.
Ӑшӑ сĕт сывлӑхшӑн усӑллӑ.






çĕ|рĕ   çĕ|çĕ   ми|хĕ   х–|шĕ

тăм   э|пĕ—эп   хĕп-хĕр|лĕ
тĕм   э|сĕ—эс   сип-си|мĕс
хал   эр|не   тĕп-тĕ|рĕс
хĕл   э|рĕм   сĕм тĕт|тĕм





## Мĕншĕн тутлă?

Мĕншĕн тутлă пан улми,
мĕншĕн тутлă çĕр çырли,
мĕншĕн тутлă хурлăхан?
Хамăр лартса тунăран,
хĕвел тĕслĕ пулнăран.

# Ӳ ӳ








п ĕ л | т е | р ӳ

к ĕ | т ӳ



? ?

ӳ

х ӳ р е

т ӳ п е

ӳ п л е

ӳ

и, е, ĕ, ӳ

| | | | |
|---|---|---|---|
| ут | у\|хӑ | ту\|па | пу\|ра |
| ӳт | ӳ\|хĕ | тӳ\|пе | пӳ\|ре |
| ус | у\|па | ху\|шӑ | сӳ\|ре |
| ӳс | ӳп\|ле | хӳ\|шĕ | çӳ\|ре |

сӳ → сӳре → сӳреçĕ

тӳ → тӳпе → тӳпеле → тӳпелешӳ

тӳ → тӳме → тӳмеле → тӳмелет

пӳ → пӳл → пӳлĕм
кӳ → кӳл → кӳлĕ



## Кĕтӳ

Манăн атте — кĕтӳçĕ. Вăл ĕне кĕтĕвĕ кĕтет. Эпĕ те унпа пĕрле кĕтӳ кĕтме çӳретĕп.

Кăнтăрла ĕнесем кӳлĕ хĕрринче тапăрта тăраççĕ.

**Ĕнепе лаша — çур пурнăç.**
**Ĕне пулсан сĕт пулĕ, сĕт пулсан çу та пулĕ.**

| | | |
|---|---|---|
| тус | пĕ\|лӳ | нух\|рат |
| ⇄ | | |
| тӳс | хĕ\|рӳ | нӳх\|реп |
| ⇄ | | |
| кур | хĕр\|хӳ | тӳп-тӳ\|рĕ |
| кӳр | вĕ\|ре\|нӳ | çӳп-çӳ\|хе |



## Вĕçетĕп эп

Кашни каçах эп тĕлĕкре
вĕçетĕп çӳллĕ тӳпере.
Ман аллăмсем — вĕл çунатсем.
Умра çунаççĕ çăлтăрсем!..

Вĕçетĕп эп, вĕçетĕп эп!
 патне çитетĕп эп.
Вĕçетĕп эп, вĕçетĕп эп!
Тĕлĕкĕмре ӳсетĕп эп...

# Чч





шăп|чăк



шăн|кăрч





?

ч — □? — ,?

чир

чёр

чар

чăр

⇒ ч → ,

| | | | |
|---|---|---|---|
| чап | чă\|хă | чы\|лай | мул\|кач |
| чап\|лă | чĕ\|лĕ | чи\|пер | вĕр\|кĕч |
| чĕп | ча\|как | чă\|пар | сĕр\|кĕч |
| чĕп\|лĕ | че\|чек | ча\|кăр | ĕм\|кĕч |

чĕ|рĕ → чĕ́|рĕ → чĕрĕ → чĕрĕп

чи|пер → чи|пе́р → чипер → чиперлен



чӗп → чӗпӗ → чӗпӗт
чар → чарӑн → чарӑну



## Машинӑран асӑрхан!

Урине аппа Уҫӑпа ҫапла каларӗ:

— Ачам! Аслӑ ҫул ҫинче асӑрханулла пул. Унталла-кунталла пӑхмасӑр ҫул урлӑ ан каҫ. Хӑвӑрт ут, анчах ан чуп. Машинӑна курсан чарӑнса тӑр.

**Ҫуран ҫӳрекенӗн ҫул урлӑ каҫмалли правилӑсене пӗлмелле тата пӑхӑнмалла. Машина ҫывхарса килет пулсан ҫул урлӑ ан каҫ.**

**Ӗмӗр пурӑн — ӗмӗр вӗрен.**

р с ç т у ӳ • х • ч ш • • ы • э • •







пă|чăр кă|ва|кар|чăн хур|чка

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ăч | чă | чăн | чăл\|ха | а\|ча |
| ĕч | чĕ | чĕн | чĕл\|хе | ар\|ча |
| ĕх | хĕ | чăх | чул | шăп\|чăк |
| ĕш | шĕ | чĕп | чӳл\|мек | шăр\|чăк |

## Тулли пурнăç

Атте те пур ман килте,
анне те пур ман килте.
Атте-анне пур çинче
пит илемлĕ çут тĕнче.

Пичче те пур ман килте,
аппа та пур ман килте.
Пичче-аппа пур çинче,
ах, аван-çке çĕр çинче.






# Ь
(çемçелĕх палли)

| | | | |
|---|---|---|---|
| хут | хал | пул | ӑ\|тӑр |
| хуть | халь | пуль | а\|тьӑр |
| ту\|рат | а\|халь | çул | вӑр\|лӑх |
| ту\|рать | са\|хал | куç\|çуль | вы\|льӑх |

çу|нá ⟶ çуна ⟶ çунат ⟶ çунать



## Тетте мар

Ачасем, шӑрпӑкпа ан выльӑр! Вӑл тетте мар. Шӑрпӑкран пысӑк инкек пулать.

| | | |
|---|---|---|
| çу\|нат | па\|рать | ку\|лать |
| çу\|нать | пе\|рет | ки\|лет |
| ту\|рат | э\|маль | ки\|вет |
| ту\|рать | э\|мел | çă\|вать |



## Автан

Пирĕн пĕр пысăк хĕрлĕ автан пур. Вăл кăнтăрла урапа çине хăпарать те: «Кикирик-ку!» — тесе авăтать.

Сасси аван, хӳри илемлĕ, авăна-авăна тăрать. Киккирикĕ пысăк, тĕклĕ уралла, качи вăрăм. Сирĕн автан çапла-и?

# Йй





йӑ|ва



йӗ|ке







 ?

й → ?
й → ?

йӗп

йытӑ

уйӑх

⇒ й → ,

| | | | |
|---|---|---|---|
| ай | йӑ | йӑ\|ва | ый\|хӑ |
| ӑй | йӗ | вӑ\|йӑ | ый\|ту |
| уй | йӳ | и\|йӗ | ыйт |
| эй | йы | йӗ\|пе | йы\|тӑ |

йӗ|пе → йӗ|пе́ → йӗпе → йӗпен

| | | | |
|---|---|---|---|
| йӳç | йыш | йăх | йĕп |
| йӳ\|çĕ | йы\|нăш | у\|йăх | йĕл\|ме |
| йӳ\|нĕ | йă\|нăш | у\|йăп | йĕл\|тĕр |

Йă-йă-йă, Йăвашка çиет йăва.
Йӳ-йӳ-йӳ, йӳнех мар лимон йӳççи.
Йы-йы-йы, йывăççем хăйне пĕр йыш.

## Йăва

Пӳрт умĕнче йăмра пур,
йăмра çинче йăва пур.
Çав йăвара кайăк пур,
çав кайăкăн чĕппи пур,
чĕппин сарă сăмси пур.



 ?

1 2 3 5 4 — к у р к а
6 5 4 3 2 1 — к у к к у к
3 2 1 4 5 — к а ч а к

 ?

[ ]
• • • • • •

йăмра йĕп йĕкел йĕтем йĕке йĕнер

# Ее









е [йэ]   е|н–т   е н|чĕк   чи|е



## Мĕн лайăх?

Ӳсен-тăраншăн ай мĕн лайăх?
Ăшă çумăр çăвать — çав лайăх.
Выльăх-чĕрлĕхшĕн ай мĕн лайăх?
Симĕс курăк ӳсет — çав лайăх.
Ача-пăчашăн ай мĕн лайăх?
Сарă хĕвел пăхать — çав лайăх.

 ?

[йэ]
↑ ?
е

е ш ч ё к

е н ч ё к

ч и е




чи|е    ен|теш    Е|ле|на
че|е    еп|ле    е|шёл





## Кушак

Мăрăл-мăрăл мăрăлкка
пирĕн кушак хăмăркка.
Чее унăн куçĕсем,
çивĕч унăн чĕрнисем.
Мăйăхĕ епле хитре,
тяпписем епле çемçе.
Пĕр сасăсăр вăл утать,
шăши курсан кап хыпать.




тет е|рет ти|ет си|ен

çи|ет че|рет ти|пет те|лей

пĕр|ле → пĕр|ле́ → пĕрлеш → пĕрлешӳ



## Пĕрлешӳре — вăй

Пĕр каткă тырă пĕрчи тупнă. Тырă пĕрчи йывăр пулнă. Каткă ăна вырăнтан та тапратайман. Вăл тусĕсене пулăшма чĕннĕ. Каткăсем ушкăнпа тырă пĕрчине çăмăллăнах йăвана сĕтĕрсе кайнă.

р с ç т у ӳ • х • ч ш • • ы ь э • •

сă ~~~ рт  сăрт  □○ ~~~ □□

□○□□
**сăрт**

| | | |
|---|---|---|
| хур | выр | лар |
| хурт | вырт | ларт |
| кĕр | сăр | нарт |
| кĕрт | сăрт | шарт |





## Кăвакал

Нарт-нарт кăвакал
шывра ишет, çăвăнать,
ик çунатне шарт çапать.

Нарт-нарт кăвакал
шывран тухать, савăнать,
сар сăмсине вылятать.

Нарт-нарт кăвакал
чĕпписене йыхăрать,
киле ертсе таврăнать.



| | | |
|---|---|---|
| урт | алт | пул\|тă\|ран |
| турт | салт | пулт\|ран |
| çурт | шалт | вĕл\|тĕ\|рен |
| пӳрт | йăлт | вĕлт\|рен |





## Йытăпа унăн мĕлки

Пĕр йытă шăмă хыпнă та каçă тăрăх пырать. Шывра вăл хăй мĕлкине курать. Ку урăх йытă пулĕ тесе хăйĕн шăммине пăрахать те лешĕн çăварĕнчи шăмма туртса илес тесе хăпăл-хапăл шывалла сикет. Анчах вăл хăй çăварĕнчи шăммине те çухатать, лешне те илеймест.

Нумая хапсăнакан нимĕнсĕр тăрса юлнă тет.

# Юю



шă|ши ю|сĕ



ка|ю|ра











?

[йу]
↑ ?
ю

ю м а н

ю р

х ă ю




**ю [йу]**

| | | | |
|---|---|---|---|
| у\|па | ут | хăй | кай |
| ю\|па | ют | хă\|ю | ка\|ю |
| у\|ла | ун | туй | пай |
| ю\|ла | юн | ту\|ю | па\|ю |



## Айван чӑх

Пӗр чӑх ылтӑн тупнӑ тет. Вӑл савӑннипе кӑт-кӑтик, кӑт-кӑтик тесе кӑшкӑрать тет. Ҫакна илтсе пӗр тилӗ юманлӑхран шӑвӑнса тухрӗ тет. Вӑл чӑхха кап кӑна ҫаклатса тарчӗ тет.



?

[у]

↑ ?

ю





костюм





люстра



## ю [у]



| | |
|---|---|
| лу | ру |
| лю | рю |
| ну | ту |
| ню | тю |

И|люк у|рюк люст|ра Па|люк
А|нюк са|лют кос|тюм Ва|нюк

### Палюк мучи

Палюк мучи — юмах ăсти.

— Асатте, юмах каласа пар-ха пире, — теççĕ тăтăшах Ванюкпа Санюк.

— Юмах ярăп, юптарăп, — пуçлать юмахне Палюк мучи.

Тепĕр чухне: «Юмах юпа тăрринче», — тет. Ачасем вара аслашшĕн юмах яма вăхăчĕ çуккине ăнланаççĕ.

**Ани шурă, вăрлăхĕ хура.**

**ю [у], ÿ** лю ню пю кю тю
лÿ нÿ пÿ кÿ тÿ

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| уп | пу | пу\|ра | тÿт\|тÿ | А\|люш |
| ÿп | пÿ | пÿ\|ре | тет\|тÿ | лÿш\|кет |
| ут | ту | ту\|па | тю\|лень | ко\|нюх |
| ÿт | тÿ | тÿ\|пе | тÿ\|лен | нÿх\|реп |

тÿ|лé → тÿле → тÿлен



## Ан макăр

Сан аннÿ те умăнта,
сан аçу та çумăнта.
Ĕçес тесен — тÿттÿ пур,
выляс тесен — теттÿ пур.

* * *

Пысăк пул, пысăк пул,
ÿссен маттур ача пул.
Юрлама та ăста пул,
ташлама та маттур пул.





# Яя

я [йа]






| | | | |
|---|---|---|---|
| а\|ла | а\|ка | я\|лав | хă\|яр |
| я\|ла | я\|ка | я\|лан | хă\|ях |
| а\|ма | ял | кă\|сă\|я | яр |
| я\|ма | ялт | ту\|я | ярт |

я|ка → я|ка́ → яка → якат

**Каласа янă сăмаха каялла тавăраймăн.**

**Ватта туя кирлĕ,**

**пĕчĕкçĕ ачана сăпка кирлĕ.**

**Мул — эрнелĕх, ăс — яланлăх.**



## Хĕл Мучи

Хĕл Мучи маттур иккен:
çывăрса эп тăриччен
эрешленĕ кантăка,
пăрлантарнă катока.

Чупса тухрăм сиккипе
ярăнмашкăн конькипе.
Таврара хаваслă шав.
Хĕл Мучи, сана мухтав!



**я [а]**

| | | | |
|---|---|---|---|
| ла | ра | та | на |
| ля | ря | тя | ня |
| ву\|ла | ва\|ра | хă\|та | ма\|на |
| вы\|ля | Ва\|ря | а\|тя | Ма\|ня |
| ял | яр | ят | ян |








## Шапа

Ачасем пĕве хĕрринче вылянă. Вĕсем шывра шапасем ишнине курнă. Ачасем вĕтĕ чул пуçтарнă та шапасене чулпа пере пуçланă. Пĕр шапи шывран кăшт пуçне кăларчĕ тет.

— Чарăнăр, ачасем, ан перĕр. Сире вăййă та — пире вилĕм, — терĕ тет.

**Шапан та чунĕ пур.**

[А] сассăн икĕ сас палли — **а, я:** **а**|т**я,** вы|л**я,** **а**н ку|л**я**н.

[У] сассăн икĕ сас палли — **у, ю:** **У**|л**ю**к, **у**|р**ю**к, К**у**|л**ю**к.

[Э] сассăн икĕ сас палли — **э, е:** **э**|пир — пи|р**е**.



## Ачасем

Улюкпа Кулюк вылянă. Ванюкпа Энтюк вылянă.

— Ванюк, атя Улюкпа Кулюк патне, — тенĕ Энтюк.

Арçын ачасем хĕр ачасем патне пынă.

— Эпир сирĕнпе выляма килтĕмĕр, — пĕлтернĕ Ванюк.






# Ь

(уйăракан паллă)

пи|ре
мăрь|е

си|ре
Тарь|е

çи|ме
çемь|е



## Ĕçчен пĕртăвансем

Марье, Тарье, Клавье — пĕртăвансем. Ирхи апат вăхăчĕ.

— Ачасем, апат çиме килĕр, — чĕнчĕ амăшĕ. — Унтан пурин те ĕçе васкамалла. Клавье пĕве хĕрне каять, Марьепе Тарье — хире.

Ĕçчен хĕрсем ӳсеççĕ Елюк аппан.

**Çемье — пурнăç тĕрекĕ.**

| | | |
|---|---|---|
| мӑрь\|е | Вӑ\|та\|ел | а\|ял |
| кӗсь\|е | Сӑрь\|ел | у\|ти\|ял |
| тухь\|я | Па\|тӑрь\|ел | Мӑнь\|ял |
| стать\|я | Пашь\|ел | Ҫӗнь\|ял |



## Ӑшӑ сӑмахсем

Тӳрккес ачасем пурах ҫав. Верук вара апла мар. Ӑшӑ сӑмах унӑн кашнин валлиех тупӑнать. «Ырӑ кун пултӑр», «телей сунатӑп», «сывӑ-и?», «тархасшӑн» тата ытти сӑмахсемпе вырӑнлӑ усӑ курать вӑл.

Верук аслисене «Эсир» тесе хисеплет.

**Ӑшӑ сӑмах — чун уҫҫи.**

р с ç т у ӳ • х • ч ш • • ы ь э ю я

шку ~~~ л шкул □□○~~~□

шкул

| | | |
|---|---|---|
| рак | кул | шнур |
| кран | шкул | класс |

## Пӳрне ячӗсем

Пуç пӳрне ытти пӳрнесене çапла калать:

— Атьăр кăвас хурар.

— Çăнăх çук, — тет шӗвӗр пӳрне.

— Кивçен илер, — тет вăта пӳрне.

— Илсен парасси, — тет ятсăр пӳрне.

— Çиес те тарас, — тет кача пӳрне.



а ӑ • в • • е • ё • • и й к л м н о п

# Оо
















по|ро|шок
конь|ки
кон|верт

## Вова

Вова Осипов пĕрремĕш класра вĕренет. Ачасене Полина Ивановна вĕрентет. Вова урокра тимлĕ итлесе ларать. Вăл лайăх вулать, илемлĕ çырать, тĕрĕс те хăвăрт шутлать. Вова Осипов тăрăшса вĕренет. Полина Ивановна ăна мухтать.

р с ç т у ӳ • х • ч ш • • ы ь э ю я

□ □ ○
**кша**

| | | |
|---|---|---|
| Сла\|ва | кан\|тра | пли\|та |
| сли\|ва | шул\|тра | при\|мер |
| кро\|лик | сен\|тре | три\|ко |



## Пĕчĕк Коля

Килте кашни эрнере
мунча кĕтет Кольăна.
Лапки парать ăшшине,
милĕк пуçлать ташшине.

Çат-çат-çат!
Çат-çат-çат!
Кирĕк тухтăр, чирĕ тухтăр,
кирлĕ пулмĕ сана тухтăр!

**Таса пурăн — сывлăхлă пулăн.**

# Ёё



ё [йо], [о]

| | | |
|---|---|---|
| пи\|лот | вер\|то\|лёт | **[йэ] е** |
| слёт | са\|мо\|лёт | **[йо] ё** |
| мо\|тор | шах\|тёр | **[йу] ю** |
| мон\|тёр | ла\|рёк | **[йа] я** |

Икĕ сасса пĕлтерекен сас паллисем: **е, ё, ю, я.**

Унсăр савăк мар Çĕн çул,
ун тавра выля та кул.
Ешĕл чăрăш йăлтăрти,
çитмĕл тĕслĕ ун тетти.

 ?

е [йэ], ё [йо], ю [йу], я [йа]






е [э], ё [о], ю [у], я [а]



## Самолёт

Атте мана илсе пачĕ
ик моторлă самолёт.
Кĕмĕл тĕслĕ ун çуначĕ,
варринче — маттур пилот.
Самолёт, самолёт,
пулăп эп хамах пилот.
Хăпаратăп сак çине,
çавăратăп моторне.
Мотор сасси кĕр-кĕр-кĕр!
Часрах ларса ĕлкĕрĕр!
Çитес çĕре çитĕпĕр,
тем те курса пĕлĕпĕр.



 ?

Юратса мана пăхсассăн
сана сĕт-çу эп çитеретĕп.
Сас палли хыçа лартсассăн
иртнĕ куна эп пĕлтеретĕп.

Мĕнле сăмахсем? Кала.

# Бб






















| | | |
|---|---|---|
| ба\|ян | би\|лет | бе\|рет |
| па\|ян | пи\|леш | пе\|рет |
| Бо\|рис | ба\|тон | бам\|бук |
| По\|ли\|на | бе\|тон | бук\|варь |

Ба-ба-ба, балкон çинче труба.
Би-би-би, билет илтĕм тет Эльби.
Бо-бо-бо, Борис валли ку альбом.
Бу-бу-бу, буфетра эп илтĕм булка.



## Автобус

Авă килет, авă килет
аслă çулпа автобус,
автобуспа ларса килет
авăк хӳре — автан тус.

Акă çитрĕ, акă çитрĕ,
ак чарăнчĕ автобус.
Автобусран анса юлчĕ
авăк хӳре — автан тус.

| | | |
|---|---|---|
| бан\|ка | те\|вет | кĕт\|мел |
| бул\|ка | кот\|лет | ка\|ра\|мель |
| бинт | мес\|лет | ши\|нель |



## Хурпа Мишша

— Эсĕ хӑравҫӑ тесе нихӑҫан та шутламан эпĕ, — кулнӑ Мишшаран Ваҫҫа.

— Кам каларĕ сана эпĕ хӑравҫӑ тесе? — чĕрре кĕчĕ Мишша.

— Паҫӑр хуртан хӑраса тарнине эпĕ хам куртӑм, — пĕлтерчĕ Ваҫҫа.

— Эпĕ тарман. Эпир хурпа ӑмӑртмалла чупрӑмӑр. Вӑл манран кая юлчĕ, — тӳрре тухма тӑрӑшрĕ Мишша.

**Чĕпĕллĕ хур патне ан пыр.**



г → ○ → ○ / ○



# Гг



ги|та|ра

| | | |
|---|---|---|
| га\|вань | шпа\|гат | ге\|ор\|гин |
| ка\|вăн | пла\|кат | Га\|ля кин |
| гал\|стук | гу\|ляш | по\|пу\|гай |
| кал\|пак | ку\|лăш | кай |

г → ○ → ○ / ○   в, й, л, м, н, р → ○ → ○ / ○ !

## Галина

Галя лайăх вĕренет —
гаммăсене шĕкĕлчет.
Гаммăсене пĕлмесен
гитарист пулма май çук.

7*

грел|ка
ге|рой
ги|та|ра
бе|ге|мот

кле|вер
пĕ|вер
шпа|лер
и|лер

хĕ|рел
ак|ва|рель
кĕ|сел
ка|ру|сель

пар|не|лé → парнеле → парнелер



## Гена ашшĕ

Гена ашшĕ хуларан таврăнчĕ. Вăл мăшăрне çуралнă кун ячĕпе саламларĕ, георгин чечекĕн çыххине парнелерĕ.

Ашшĕ Генăна вылямалли грузовик парчĕ, сĕтел çине груша кăларса хучĕ.

Гена ашшĕне тав сăмахĕ калама манмарĕ.



## Хураçка

Пирĕн Хураçка ятлă пысăк йытă пур. Эпĕ ăна хĕлле пĕчĕкçĕ çуна кӳлтĕм. Хам çуна çине лартăм та:

— Ну, атя, Хураçка, урамалла, — тесе пушăпа çат! тутартăм.

Хураçка çăтăр-çатăр çуни-мĕнĕпе кĕлет айне кĕрех кайрĕ. Манăн пуçа кĕлет пĕрени çумне шан! тутарса хăварчĕ.

**Вăйăран вăкăр тухать.**
**Алăра ĕç пултăр, пуçра ăс пултăр.**

? **5 4 3 2 1** **калав** **2 3 4 1** **улăх** **1 2 5 4 3** **сурăх**

# Дд



Да|ша   ди|ван   ды|ня

Та|ня   ти|ха   ты|на



?



д

к, п, с, ç, т, х, ш, ч

!

до|ми|но   Ди|ма
то|мат   Ди|на
ду|хи   Ду|ня
ту|хăç   Де|нис



## Юр çимен

Денис ӳсĕрме пуçларĕ.

— Юр çирĕн пулĕ-ха, — тет ашшĕ.

— Çук, çимен.

— Ача садĕнче кам юр çинĕ-ши?

— Дина çирĕ.

— Дина пĕчĕк-çке, юр çиме пĕлмест.

— Ха, — тет кăмăлсăррăн Денис, — эпĕ ăна мĕнле çимеллине кăтартрăм.

р с ç т у ӳ • х • ч ш • • ы ь э ю я

тет|радь
тет|те

си|рень
кĕ|рен

у|чи|тель
сĕ|тел



## Çухалнă укçа тупăнни

Класра пĕр ачан укçа çухалнă. Ачасенчен ăслăраххи çапла калать:

— Ачасем, эпĕ сире кашнине улăм пĕрчи парса тухатăп. Вĕсем пурте пĕр тан. Укçа вăрланă ачан вара улăм пĕрчийĕ вăрăмланать.

Пăртак вăхăт иртсен, улăм пĕрчисене пуçтарса илнĕ чух, пĕрин улăм пĕрчийĕ кĕске пулнине асăрхаççĕ.

Вăрă камне пĕлчĕç тет вара.

**Чее тилĕ те читлĕхе çакланать.**

# Жж




Жан|на
шан|нӑ
Же|ня
ше|ре|пе

жа|кет
же|тон
жи|лет
жур|нал



ж → ◻ !

э|та|жер|ка
шер|пет
жи|раф
ши|фер



## Дружок

Димӑн Дружок ятлӑ йытӑ пур.
Дружок Дима хушнине итлет.
— Дружок, уруна пар!
Дружок урине парать.
— Дружок, патак илсе кил!
Дружок патак илсе пырать.
— Маттур эсӗ, Дружок!

# Зз



За|хар   Зи|на   Зо|я

са|хăр   си|вě   Со|ня








зе|фир
се|хет
му|зы|ка
по|сыл|ка

## Значок

Раманăн Захар ятлă куккăшě пур. Унăн кăкăрě çинче значок.

— Кукка, манăн та значок çакас килет.

— Эпě аслă пěлӳ илнě, çавăнпа çак значока çакса çӳреме тивěçлě. Эсě тăрăшуллă ача пулсан пěр значок кăна мар, темиçе значок та çакма тивěçлě пулăн.

# Фф



| | | | |
|---|---|---|---|
| ав | ва | ив | ви |
| аф | фа | иф | фи |
| ов | во | ев | ве |
| оф | фо | еф | фе |
| ув | ву | ыв | вы |
| уф | фу | ыф | фы |



?

ф, в →



| | | |
|---|---|---|
| шарф | Фа\|и\|на | Фо\|ма |
| торф | Ва\|ня | Во\|ва |
| жи\|раф | Фе\|ня | Фи\|ля |
| шеф | Ве\|ня | Ви\|тя |

ф →



в →



Фа-фа-фа, фанерсем тăвать Уфа.
Фе-фе-фе, Федьăн çĕнĕ галифе.
Фи-фи-фи, Филимон юсать софит.
Фу-фу-фу, фургон тĕпĕ миçе фут?



## Жираф

Пысăк читлĕхре
жираф.
Мăйĕнче ун
капăр шарф.
Хăй тăсланкă та чăпар,
çав-çавах хаваслă мар.
Туртăнать Африкăна —
хăй çуралнă вырăна.

| | | |
|---|---|---|
| вир | све\|то\|фор | фу\|фай\|ка |
| мир | шо\|фёр | фильм |
| хир | ши\|фер | коф\|та |



## Çулталăкра 12 уйăх:

кăрлач — январь,
нарăс — февраль,
пуш — март,
ака — апрель,
çу — май,
çĕртме — июнь,
утă — июль,
çурла — август,
авăн — сентябрь,
юпа — октябрь,
чӳк — ноябрь,
раштав — декабрь.

## Эрне. Кун ячĕсем

Эрнере çичĕ кун: тунти кун, ытлари кун, юн кун, кĕçнерни кун, эрне кун, шăмат кун, вырсарни кун.

Эсĕ хăш уйăхра çуралнă?



ц → □ !

цифра
цирк
цемент
станци

единица
ранец
страница
больница





## Канаш станцийӗ

Эпир — атте, анне тата эпӗ — Хусана тӑвансем патне кайма тухрӑмӑр.

Автобус ҫине ларса Канаш автостанцине ҫитрӗмӗр. Кунта автобуссем пӗр вӗҫӗм килсе-кайсах тӑраҫҫӗ.

Автостанцинчен инҫех мар чугун ҫул станцийӗ вырнаҫнӑ. Эпир поезд ҫине ларса Хусана ҫитрӗмӗр.

# Щщ



плащ
ра|шча
щёт|ка

об|ще|жи|ти
у|бор|щи|ца
ка|мен|щик



щ → , !

## Щётка

«Щётка ил те пушмакна тасатсам эс лайӑхрах», — терӗҫ килтисем мана урама тухма чарсах.

Шӑртлӑ щётка тасатма акӑ пуҫӑнчӗ кӗҫех. Урари пушмакӑма турӗ ҫӗнӗ пек каллех.









* * *

Вӑл пулать-мӗн тӗрлӗрен:
шӑл тасатать ирсерен,
тепри пушмак ҫутатать,
леш тумтире якатать,
ак ку шӑлса тасатать.






# Ъ

(хытăлăх палли)



съезд
подъ|езд
разъ|езд

## Пирĕн подъезд

Эпир пилĕк хутлă çуртра пурăнатпăр. Ку çуртра тăватă подъезд. Пирĕн подъездра вун пилĕк хваттер. Пирĕн хваттер тăваттăмĕш хутра. Вăл виçĕ пӳлĕмлĕ.

Пирĕн çемьере тăватă çын: атте, анне, эпĕ тата шăллăм.

# ХАМĂР ТĔЛЛĔН ВУЛАТПĂР

## Тăван çĕршывăм — Чăваш Ен



Иван Яковлевич Яковлев — чăвашсен чаплă та мухтавлă çынни.

### Иван Яковлевич Яковлев

Иван Яковлевич Яковлев — вĕрентекен. Вăл Чĕмпĕрте пурăннă. Унта чăваш шкулне уçнă. Иван Яковлевич чăваш алфавитне тунă. Букварь хатĕрленĕ. Ачасене çырма, вулама, шутлама вĕрентнĕ. Вĕсем валли калавсем çырнă.

Иван Яковлевич — чăваш халăхне çутта кăларакан çын. Яковлев чăваш халăхне вĕрентес тесе нумай ĕçленĕ. Ăна чăваш халăхĕ юрататъ, яланах асра тытатъ.

## Халал сӑмахӗ

Ырӑ ҫын пул. Ватӑ ҫынсене, хӑвӑнтан асличсене хисепле, тантӑшусем умӗнче пуҫна ан каҫӑрт, хӑвӑнтан кӗҫӗннисене пурне те кӑмӑл кур. Аҫупа аннӳне хисепле, вӗсен сӑмахӗнчен ан тух.

Сана усал тума ҫуратман, ырӑ тума ҫуратнӑ! Ӑна эсӗ ан ман: мӗн вӑй ҫитнӗ таран ҫынсене ырӑ тума тӑрӑш. Усал ӗҫ тума мар, усал сӑмах та ан кала. Ваттисем калаҫнӑ чух вӗсен сӑмахне ан пӳл, пӗр чӗнмесӗр итлесе тӑр.



Ҫыннăнне пĕр япала та ан вăрла, хăвăн мĕн пуррипе тутă пул. Ҫынтан кивҫен илсессĕн вăхăтĕнче каялла пар. Каланă сăмаха тыт.

Нихăҫан та ан суеҫтер. Наян ан пул, ĕҫчен пул, хастарлă пул. Ҫынпа хирĕҫ пулсассăн ырă, ăшă сăмах кала.

Ҫак каланă сăмахсем тăрăх пурăнсассăн ырă ҫын пулăн, сана юлташусем, пĕлĕшӳсем пурте юратĕҫ. Санăн пурнăҫу телейлĕ пулĕ.

Иван Яковлев

## Уҫăлма тухнă шăши ҫури

Пĕр шăши ҫури шăтăкĕнчен уҫăлса ҫӳреме тухнă тет. Ҫӳресен-ҫӳресен вăл амăшĕ патне таврăнчĕ те ҫапла каларĕ тет:

— Ах, анне, эпĕ икĕ кайăк куртăм-ҫке! Пĕри пит аван, тепри тискертен те тискер ĕнтĕ!

— Мĕнле кайăксем вĕсем апла? — тесе ыйтрĕ тет амăшĕ.

— Тискерри картишĕнче ак ҫапла уткаласа ҫӳрет-ҫке!.. Хăй хура уралла, хĕрлĕ ҫĕлĕклĕ, сăмси кукăр! Эпĕ ун умĕнчен иртсе пынă чух хăрах урине ҫӳлелле ҫĕклерĕ те ҫăварне карса пăрахрĕ, унтан кăшкăрса ячĕ! Хăранипе нисҫта кайса кĕре пĕлмерĕм ҫав.



— Ара, ачам, автан-ҫке вăл! Унтан мĕн апла тĕрлĕ хăрасси пур! Унăн пирĕн тĕлтен нимĕн усаллăхĕ те ҫук. Тата тепри мĕнлеччĕ?

— Тепри хĕвел ăшшинче ăшăнса выртатчĕ. Вăл шурă мăйлă, сăрă ураллă. Шурă ăмăрне ҫулакаласа выртатчĕ. Хӳрине хăй кăшт вĕл-вĕл сиктеркелет, ман ҫине куҫне пĕр илмесĕр ăшшăн пăхать.

— Эй, айван, айван!.. Ачам, вăл кушак аҫи вĕт, — тесе каларĕ тет амăшĕ ҫурине. — Вăт унтан хăрамалла, тармалла.

Иван Яковлев

## Парне

Пĕррехинче каçхине
ырă чунлă асанне
уçрĕ те шур арчине
чĕнчĕ мана хăй патне.
Кĕмĕл тевет, мăй çыххи,
тухья, сурпан, пиçиххи,
хĕрлĕ сатин кĕпесем,
сарă хитре саппунсем,
çут калушпа шур чăлха,
пурçăн тутăр, ик çăмха... —
çаксене йăлт асанне
пачĕ мана — мăнукне.

Раиса Сарпи





Андриян Григорьевич Николаев — чăвашсен чаплă та мухтавлă ҫынни.

## Андриян Григорьевич Николаев

Андриян Григорьевич Николаев — виҫҫĕмĕш космонавт лётчик. Вăл чăваш ачисемшĕн уйрăмах ҫывăх. Ҫапла пулмасăр, вăл пирĕн ентеш-ҫке. Андриян Николаев Чăваш ҫĕрĕнче чăваш ҫăкăрне ҫисе, чăваш ваййисене выляса, чăваш юррисене юрласа ӳснĕ чăваш ачи.

Паттăр космонавтăн тăван ялĕ Шуршăл ятлă. Шуршăл тĕлĕнмелле илемлĕ вырăнта вырнаҫнă.

Ял урамĕсем тирпейлĕ, ешĕл йăмраллă. Ҫывăхра — ҫырмасем, ҫарансемпе улăхсем, вăрман. Ҫавал шывĕ те ҫак ял ҫумĕпех юхса иртет. Ҫавал — Атăлăн сылтăм юппи.

Андриян Григорьевич «Восток-3» караппа тĕнче уҫлăхне вĕҫсе хăпарнă, тĕнчере




çĕр-çĕр халăх йышĕнче чăвашсем те пурăнни, Шуршăл ялĕ те пурри çинчен пĕлтернĕ. Вăл икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ ятне тивĕçнĕ.

Шуршăлти Космонавтика музейĕ — Раççейри пĕртен-пĕр космонавтика музейĕ.

Андриян Григорьевич Николаев — Чăваш Ен мухтавĕ. Унăн ырă ячĕ-сумĕ, çутă сăнарĕ яланах халăх асĕнче упранĕ.

Юхма Мишши

## Паттăр Андриян

Тӳпере вĕççе çӳрерĕн  
Кăйкăрпа пĕр тан,  
Эс чăваш ятне çĕклерĕн,  
Паттăр Андриян.

Уйăха салам каларăн
Анлă Атăлтан,
Çăлтăра та эс пуç тайрăн,
Паттăр Андриян.

Юрий Сементер

## Манăн тăван Шуршăл

Шуршăл ялĕ таçтанах курăнса ларать. Вăл «шурă çăл» тенинчен пулса кайнă. Пирĕн унта çăлкуç питĕ нумай. Кашнин хăйĕн ячĕ пур. Пĕри — Сивĕ çăл, тепри — Çутă çăл, виççĕмĕшĕ — Сенкер çăл.



Ял Атăлăн сылтăм енче айлăмра ларать. Атăл çийĕн хĕвел хăпарнине курма мĕн тери илемлĕ!

Тĕнче уçлăхĕнче вĕçнĕ чухне манăн ĕçчен Тăван çĕршыв, тăван Шуршăл яланах юнашар пулчĕç. Шуршăл тесен кăмăл пушшех çĕкленетчĕ. Мĕнле-ши унта анне, пиччепе шăллăм, йăмăкăм? Мĕнле эсир унта, тăван шурă çăлсем? Мĕн тери юратса ĕçнĕ пулăттăм сирĕн вăй кĕртекен сивĕ шывăра. Атте-анне килĕ çывăхĕнче шăнкăртатса юхакан шыва нимĕн те çитмест. Çапла шухăшларăм эпĕ Çĕр тавра вĕçнĕ чухне. Таврăнсан сирĕн шывăра нумай хутчен пырса ĕçрĕм, тăван Шуршăл çăлĕсем.

Андриян Николаев

## Чăваш çĕршывĕ

Чăваш çĕршывĕ!

Вăл улăхсемпе, вăрмансемпе пуян. Вăрмансенче тĕрлĕ йывăç ÿсет: юман, çăка, хыр, чăрăш, вĕрене, ăвăс, хурама, хурăн, пилеш, çĕмĕрт, шĕшкĕ. Унта тĕрлĕ чĕр чун пурăнать: мулкач, тилĕ, пăши, упа, кашкăр, пакша.

Вăрман вăл — Чăваш çĕршывĕн илемĕ.






Чăваш çĕршывĕ урлă анлă Атăл, лăпкă Сăр, Çавал, Ункă, Хырла, Пăла, Кĕтне, Энĕш, Сурăм шывĕсем юхса выртаççĕ.

Шупашкар — Чăваш Республикин тĕп хули. Паянхи Шупашкар — пысăк та илемлĕ хула. Мĕн кăна туса кăлармаççĕ пулĕ унта: пир-авăр, атă-пушмак, кĕпе-тумтир, сĕтел-пукан, хăватлă тракторсем...

Шупашкарта аслă шкулсем, театрсем, культура керменĕсем пур. Унта чăваш сăмахĕ витĕмлĕн те уççăн янăрать.

Чăваш Республикинче тата çакăн пек хуласем пур: Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле, Етĕрне, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Канаш, Улатăр.

Пирĕн республикăн хăйĕн ялавĕ, гербĕ тата гимнĕ пур.

Ӳсет, чечекленет юратнă Чăваш çĕршывĕ!

Геннадий Волков

## Пирĕн ял



Пирĕн ял вырнаҫнă
юхан шыв хĕрне.
Урамĕсем аслă,
ҫурчĕсем хитре.

Йăмрасем ӳсеҫҫĕ
лăпкăн кашласа.
Кайăксем чилеҫҫĕ
чăваша савса.




Ферма, завод евĕр,
шав шавлать пĕрмай,
кăларать вĕҫ-хĕрсĕр
сĕт-ҫу, аш-какай.

Ăмăртса ĕҫлеҫҫĕ
уйра та ҫынсем,
тимлĕ ӳстереҫҫĕ
ылтăн тырăсем.



Чупатпăр эпир те
ирсерен шкула.
Ҫитĕнсен вĕрентĕ
пире мăн хула.

Петĕр Ялкир

## Çĕр парни

— Акă, ачасем, сире валли çĕр парни, çиййĕр, — терĕ амăшĕ тин пĕçернĕ çĕнĕ çĕр улмине сĕтел çине лартса.

— Çĕр парни тетĕн-и? — тĕлĕнчĕ Сентти.

— Çĕр улми вăл — çĕр парни, ăна çĕр ÿстерсе парать, — терĕ Раман.

— Çăкăр та çĕр çинче ÿсет-и? — ыйтрĕ Сентти.

— Уй-хирте çĕр çинче тыр-пул ÿсет. Армана тырăран çăнăх тăватпăр. Çăнăхран çăкăр пĕçеретпĕр, — ăнлантарчĕ ăна Раман.

— Пахча çимĕç те, тыр-пул та, улма-çырла та çĕр çинче ÿсеççĕ, эпир вара вĕсенчен тутлă апат хатĕрлетпĕр, — терĕ амăшĕ.

## Ăшă çумăр



Уçă çилĕ килет
кăвак пĕлĕт илсе.
Кăвак пĕлĕт килет
ăшă çумăр илсе.
Ăшă çумăр килет
ырлăх-пурлăх илсе.

Петĕр Эйзин



## Тарланă Тарас

Çулла. Çанталăк шăрăх тăнă. Тарас пахчара çум çумланă. Вăл хытă тарланă. Çав вăхăтра урамра ачасем шыва кĕме чупни курăннă. Тарас та вĕсенчен юлман.

Ачасем шыва кĕме пуçланă. Тарас чупса пынă та хывăннă-хывăнман шыва чăмнă. Чăмасса чăмнă, анчах вăл каялла тухайман. Ăна шăнăр туртса хутлатса лартнă.

Юрать-ха çывăхрах аслă класра вĕренекен Çеруш хĕвел питтинче хĕртĕнсе выртнă. Вăл Тараса шывран туртса кăларнă.

Ачасем, хытă тарланă пулсан шыва чăмма ан васкăр!

Иван Шухши



## Аттепе анне

Ашшӗпе амӑшӗ апат шырама тухса кайсан шӑнкӑрч чӗпписем хӑйсен пӗчӗк чӗлхипе пикенсех чӗвӗлтетрӗҫ.

— Чӑн та, ырӑ пирӗн анне. Пире валли ӑман тупса килет, — терӗ пӗри.

— Лайӑххах ҫав атте пурри. Вӑл питӗ вӑйлӑ. Атте пулман пулсан-и, пире тахҫанах ҫерҫисем ҫӗре кӑларса ывӑтатчӗҫ. Пирӗн йӑвара вӗсем хӑйсем пурӑнасшӑн пулнӑ. Атте вӗсене хӑваласа янӑ, — терӗ тепри.

Виҫҫӗмӗшӗ те сӑмах чӗнмесӗр юлмарӗ. Сап-сарӑ сӑмсине хӑй ҫумне сӗркелерӗ те чӗвӗлтетме пуҫларӗ.

— Иккӗшӗ те сывлӑхлӑ пурӑнччӑр пирӗн аттепе анне. Вӗсем пулсан пире ӳссе ҫитӗнме те ҫӑмӑл.

Геннадий Мальцев



## Асанне

Асанне ирех тăрать —
ăш ыйхăран вăратать.
Ăш ыйхăран вăратать,
вăратнă май сăмахлать:

— Каçпа часах выртмалла,
ирпе ирех тăмалла.
Кам ирпе ирех тăрать —
пултаруллă çын пулать.

Николай Ыдарай



## Асанне е кукамай

Кайрăм асанне патне
пĕринче эп хăнана.
— Асанне, теп, асанне,
пĕрре вăрç-ха Динăна.
Мĕншĕн вăл сана ялан
кукамай тесе чĕнет?
Çак мана мĕнпур чунтан
кулленех кӳрентерет.

— Çук, — тет Дина, — эсĕ ху
йăнăшатăн яланах.
Кукамай, тархасшăн, хуш,
тĕрĕс чĕнтĕр вăл сана.
Асанне йăл кулнă май:
— Шутлăр, — терĕ, — иксĕрех:
асанне е кукамай?
Хăшĕ пулĕ тĕрĕсрех?

Петĕр Çăлкуç

## Чĕрĕп

Пĕрре ачасем вăрмана кайнă. Вĕсем унта чĕрĕп курнă та ăна тытасшăн пулнă. Петĕр мучи ачасене асăрханă та çапла каланă:

— Ачасем, чĕрĕпĕн çурисем пур, вĕсем выçă, ан тивĕр ăна.

Ачасем Петĕр мучие итленĕ. Чĕрĕп хăйĕн çурисем патне чупнă.

Ачасем, чĕрĕпсене ан тивĕр. Вĕсем усăллă чĕр чунсем.



## Чăх чĕпписем

Чăх хăйĕн чĕпписемпе уничере курăк çинче усăлса çӳрет. Вăрман енчен хура пĕлĕтсем йышлăн капланса тухрĕç. Ял çине васкаса шуса килме пуçларĕç.

— Кас пулать, атьăр анне çуначĕ айне! — шип-шип туса ыттисене чĕнчĕ пĕр чĕппи.

Ăна итлесе ыттисем те амăшĕн çуначĕ айне кĕрсе ларма хатĕрленчĕç.

— Чĕппĕмсем, — астутарчĕ амăшĕ, — халĕ кăнтăр вăхăчĕ кăна. Кусем хура пĕлĕтсем шуса тухрĕç. Вĕсем хĕвел тĕлне пулсан кун тĕксĕмленет.

— Мĕн вăл пĕлĕт? — ыйтрĕ пĕри.

— Мĕн вăл хĕвел? — пĕлесшĕн пулчĕ тепри.

— Мĕн вăл çутă кун? — ăнланасшăн хыпаланчĕ виççĕмĕшĕ.

Амăшĕ чĕпписене пĕлĕт çинчен те, хĕвел çинчен те, çутă кун çинчен те йĕрки-йĕркипе ăнлантарчĕ.

— Хĕвел тухрĕ! — сасартăк кăшкăрса ячĕ пĕри.

Пурте таврана саланчĕç. Пĕчĕк сăмсисемпе симĕс курăка сăхма пуçларĕç.

Геннадий Мальцев

# Юмах ярăп, юптарăп

## Кишĕр-мишĕр

Йăран çинче кишĕр ӳснĕ.

«Йăлăхтарчĕ пĕр вырăнта ларса. Кайса çӳрем-ха. Кӳрше кĕрсе тухам», — шутлать вăл. Таплаттарать хăй çулĕпе. Ăна хирĕç мулкач сиккелесе пырать. «Эй-эй! Мĕнле тутлă апат килет», — савăнать вăл.

— Кишĕр-мишĕр, ăçта çул тытрăн? — ыйтать мулкач çывăхах пырса.

— Купăста инке патне хăнана каятăп, —



тет кишĕр. «Купăста патне, — пушшех те хĕпĕртесе ӳкет мулкач. — Мĕн чухлĕ тутлă апат пулать ман валли!»

— Кишĕр-мишĕр, мана та пĕрле илсе кайха, — тет мулкач.

— Атя, кайăпăр, — килĕшет кишĕр.

Утаççĕ хайхи кишĕрпе мулкач.

Кӳршĕ пахчара Палкан ятлă йытă пурăннă. Мулкач çывхарнине туять те çавă тытăнать вĕрме.

— Хам! Хам!

— Ах, кишĕр-мишĕр! — тăпах чарăнать мулкач. — Вăхăт çук манăн хăнасем тăрăх çӳреме... Тепре куриччен! — тесе вăртах çаврăнать те вăрманалла тапса сикет.

Зоя Нестерова

## Автанпа тилĕ

Картишĕнче темĕн чухлĕ чăх-чĕп çӳрет. Тул енче, çӳллĕ карта хыçĕнче, сарă тилĕ йăпшăнса пырать. Шĕвĕр сăмсине унта-кунта тĕрткелесе пăхать, анчах ниçтан та кĕмелли çук. Акă хӳме çине автан вĕççе ларчĕ те çуначĕсене çат-çат-çат! çапса янăравлăн юрласа ячĕ.



— Ки-ки-ре-ку-у-у!

— Ах, автан тус! — йăпăртатса пычĕ ун патне тилĕ. — Сассу ытла хăватлă вара санăн. Вăйлă пулас эсĕ. Ан кунта, пĕрле выльăпăр.

— Вăхăт çук манăн санпа выляма. Эпĕ Хураçка тусăма чĕнетĕп. Вăл паян ирех вăрмана тилĕ тытма кайрĕ. Ки-ки-ре-ку-у-у! — каллех хыттăн кăшкăрчĕ автан.

Çакна илтсен чее тилĕ вĕлт çаврăнчĕ те тарăн çырма еннелле вĕçтере пачĕ.

Зоя Нестерова

## Тилĕпе шăши çури

— Шăши çури, шăши çури, санăн сăмсу мĕншĕн хура?

— Çĕр чаврăм.

— Мĕншĕн çĕр чаврăн?

— Шăтăк турăм.

— Мĕншĕн шăтăк турăн?

— Санран, тилĕ, пытанма.

— Шăши çури, шăши çури, сана сыхласа тăрăп та ярса тытăп!

— Манăн вара шăтăкра вăрттăн пӳлĕм пур.

— Çиес килсен — тухатăнах!

— Манăн вара шăтăкра пĕчĕк кĕлет пур.

— Шăши çури, шăши çури, эпĕ санăн шăтăкна чавса тустарса пĕтерĕп.

— Эпĕ вăрттăн çулпа тухăп та тарăп — курса та юлаймăн!

Виталий Бианки



# Вĕренни — пысăк пуянлăх

## Шкула кайнă чух

Эпир Маюк тантăшпа иксĕмĕр пĕрле шкула кайма тухрăмăр. Ял урамĕпе утнă чухне хамăртан аслă çынсене нумай тĕл пултăмăр. Анюк аппапа Петĕр пичче ĕçе васкатчĕç. Кĕтерне инке шыв ăсса таврăнатчĕ.

Маюкпа иксĕмĕр вĕсене пурне те сывлăх сунтăмăр. Вĕсем те пире ăшă сăмахсем каларĕç.

Юрий Сементер

## Тав

Манăн пичче Мускавра пурăнать. Кашни çулах, пан улми пиçнĕ вăхăтра, вăл пирĕн пата хăнана килет. Пичче яланах парнесем илсе килет. Кăçал та вăл мана хитре ӳкерчĕклĕ кĕнеке пачĕ. Эпĕ саваннипе парнене аттепе аннене кăтартма васкарăм. Атте мана:

— Парне илсен тав тăвас пулать, — терĕ.

— Пысăк тав сана, пичче, — терĕм эпĕ.

— Тĕрĕс. Йĕркеллĕ ача ырă ĕçшĕн яланах тав тăвать, — терĕ пичче мана мухтаса.

Эпĕ халĕ нихçан та тав тума манмастăп.

В. Прохоров

## Эп хамах



Никамран та маларах
эп паян вăрантăм.
Вырăна та эп хамах
майласа пуçтартăм.

Çăвăнтăм сивĕ шывпа,
тăхăнтăм, тумлантăм.
Пĕчĕк симĕс лейкăпа
чечексем шăвартăм.



Çинĕ хыççăн эп хамах
чашăк-тирĕк çурăм.
Чăхсене те эп хамах
апат пама тухрăм.



Анне тĕлĕнчĕ. Тăрать
ним те ăнланмасăр.
— Хам тăвап, — тесе калать
вăл мана шанмасăр.

— Эс, анне, мана ан чар
ĕçлеме пĕрре те.
Эп халь пĕчĕк пепке мар,
эп халь пысăк ĕнтĕ.

Петĕр Эйзин



## Чи тутли

Çуркунне Светлана, Валерик тата Зина çĕр чавса кăпкалатрĕç, кĕреплепе сӳрелерĕç те виçĕ тикĕс йăран турĕç. Пĕри — Светланăн, тепри — Валерикăн, виççĕмĕшĕ — Зинăн.

Светлана кишĕр акрĕ, Валерик — çарăк, Зина вара — хăяр.

Ачасем çăвĕпех пахчара тăрăшса ĕçлерĕç. Кĕркунне çитрĕ. Йăрансем çинче кишĕр, çарăк, хăяр питĕ ăнса пулчĕ. Ачасем çимĕççене тутанса пăхрĕç.

— Мĕнле тутлă кишĕр! — терĕ Светлана.

— Мĕнле тутлă çарăк! — терĕ Валерик.

— Мĕнле тутлă хăяр! — терĕ Зина.

Тĕрĕс вĕт: хăвăр акса, хăвăр пăхса ӳстернĕ пахча çимĕç чăннипех те тутлă.

Борис Данилов

## Урамра

Виççĕри Ваçук,
тăваттăри Таçук,
пиллĕкри Палюк,
улттăри Улюк,
çиччĕри Çерук
тухнă урама
вăйă выляма.



Чупнă чылайччен,
хырăм выçиччен
виççĕри Ваçук,
тăваттăри Таçук,
пиллĕкри Палюк,
улттăри Улюк,
çиччĕри Çерук.

Хытă ĕшенсе
ывăнса çитсен
утнă килелле
виççĕри Ваçук,
тăваттăри Таçук,
пиллĕкри Палюк,
улттăри Улюк...



Пĕр юлташĕ çук.
Кам-ха ку?

Людмила Смолина

## Çуралнă кун

Юрăн çуралнă кунĕ çитрĕ. Ун патне хăнасем пухăнчĕç, парнесем илсе килчĕç.

Володя кăранташсем туяннă, Наташа — ÿкерчĕклĕ кĕнеке, Таня — шоколад. Пĕчĕкçĕ Ира парнине килне манса хăварнă иккен, çавăнпа вăл йĕрсе ячĕ. Юра йăл кулса илчĕ те:

— Ан йĕр, Ира! Эпĕ сана кĕтнĕ вĕт, парне мар, — терĕ.

Николай Карай

## Кентти ÿкерет



Кăранташ — тĕрлĕ тĕсли,
пĕр тетрадь — хулăн хутли...
Кентти ашшĕн парнине
кăтартать халь кашнине.
— Ак ÿкертĕм:
ку — тÿпе,
çап-çут çăлтăр кĕтÿпе...
Ку ак пирĕн тăван ял,
ку çырма,
кунта вăрман...
Çÿл тÿпере, ав куран, —
Николаев Андриян.

Егор Афанасьев



## Мĕн тума пĕлетĕн?

Пĕрремĕш класа çĕнĕ вĕренекен пычĕ. Вăл Владик ятлă. Учительница ăна Таньăпа юнашар лартрĕ. Таня пĕрремĕш урокра шăпах ларчĕ-ха. Иккĕмĕш урокра тӳсеймерĕ, мухтанма пуçларĕ:

— Эпĕ юрăсем юрлама пĕлетĕп. Эпĕ питĕ хытă чупатăп. Эпĕ кантрапа сикме пултаратăп... Эсĕ мĕн тума пĕлетĕн?

— Шăп ларма тата учительницăна итлеме пĕлетĕп, — тавăрчĕ Владик.

Юрий Ермолаев

## Икĕ çирĕм пус

Урамра пĕр ача макăрса ларнă. Ун патĕнчен иртсе пыракан çын чарăнса:

— Мĕншĕн макăратăн, ачам? — тесе ыйтнă.

— Çирĕм пус укçа пурччĕ ман, халĕ çухатрăм, — тенĕ лешĕ.

— Акă ме çирĕм пус, ан макăр, — тенĕ те çын утма тăнă. Вăл пĕр-ик утăм ярса пуснă çĕре ача тата хытăрах кăшкăрса макăрса янă. Иртсе каякан çын каялла çаврăнса пынă та:

— Эсĕ мĕншĕн кун пекех кăшкăрса макăратăн? — тесе ыйтнă каллех.

— Çирĕм пуса çухатман пулсан халь ман икĕ çирĕм пус укçа пулатчĕ, — тенĕ ача.

Иван Патмар

## Çĕр çырли

Çĕр çырли, çĕр çырли,
чи шултри те чи хĕрли,
эпĕ татрăм пĕр пурак —
хăналарăм Якура.
Якур чирлĕ — утаймасть,
больницăран тухаймасть.
Çырла çитĕр ытларах,
тен, сывалĕ хăвăртрах.

Анатолий Ыхра



## Мĕн тума юрамасть?

Эс килте пĕччен пулсан
ют çынна ан кĕрт нихçан.
Халь пур вăрă,
хулиган...
Вĕсенчен ялан сыхлан.




Ют машинăна ан лар —
ют çын санăн кукку мар.
Илсе кайĕ таçталла,
таврăнаймăн каялла.



Хуçасăр япалана,
пакета е сумкăна,
ан варалан тĕкĕнсе,
бомба кайĕ сирпĕнсе.




Ан выля шăрпăкпала
е зажигалкăпала.
Вăййу ярĕ çемьене
çывăрма пускил патне.

Петĕр Ялкир

**Ырă çынпа паллаш, усал çынтан тар.**
**Инкек куçа курăнса килмест.**

## Таня кӗнеке вулать

Амӑшӗ ҫӗнӗ кӗнеке илсе килчӗ. Вӑл ӑна Таньӑна парнелерӗ те ҫапла каларӗ:

— Эсӗ пӗчӗккӗ чухне сана асаннӳ вуласа паратчӗ. Халӗ эсӗ пысӑк ӗнтӗ. Ку кӗнекене асаннӳне ху вуласа пар-ха.

Таня кӗнекене илчӗ. Вӑл амӑшне парнешӗн тав турӗ. Унтан Таня асламӑшӗ патне чупса пычӗ те:

— Лар, асанне! Эпӗ сана юмахсем вуласа парӑп, — терӗ.

Таня виларӗ. Асламӑшӗ итлерӗ. Амӑшӗ савӑнчӗ.

Валентина Осеева





## Кушак çури

Кушак çури сĕтел çинче ларакан аквариум тавра уткаласа çӳрерĕ, урине шыва чиксе пăхрĕ. Пĕр пуллине тытса çиесшĕнччĕ, анчах та лешсем тыттармарĕç. Пӳрте Васук кĕчĕ. Кушак çури урайне тӳп! сиксе анчĕ.

— Каллех айăпа кĕтĕн-и-ха? — терĕ ăна Васук.

Кушак çури йăвашшăн макăрса илчĕ те Васук урине ачашшăн сĕртĕнчĕ.

Николай Карай

## Вĕрентĕм вулама



Çӳреттĕм кĕнеке йăтса:
«Тархасшăн, парăр вуласа», —
калаттăм эп асаннене
е йăлăнаттăм аннене.
Вĕрентĕм халĕ вулама,
чăрмав кӳместĕп никама.

Валентин Берестов

Учебное издание

**Ермошкина Анисия Алексеевна**
**Чернова Нина Николаевна**

**ЧĂВАШ АЗБУКИ**

**ЧУВАШСКАЯ АЗБУКА**

**1 КЛАСС**

Учебное пособие
для общеобразовательных организаций

Редактор *А.Г. Владимирова*
Макет художника *В.Н. Гончарова*
Художники *М.Ю. Николаев, И.В. Алексеев, Н.И. Орлова, Т.И. Немцева, Н.А. Васильева*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *И.Н. Фомина*
Компьютерная верстка *Е.В. Ивановой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 6600. Подписано к печати 09.07.15. Формат 70x90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Букварная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 10,53+0,29 форз. Тираж 1900 экз. Заказ № 352. Изд. № 71.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Мининформполитики Чувашии,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография № 1»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | Аа *Аа* | Ӑӑ *Ӑӑ* | Бб *Бб* | |
| Ее *Ее* | Ёё *Ёё* | Ӗӗ *Ӗӗ* | Жж *Жж* | |
| Лл *Лл* | Мм *Мм* | Нн *Нн* | Оо *Оо* | |
| Тт *Тт* | Уу *Уу* | Ӳӳ *Ӳӳ* | Фф *Фф* | |
| | Щщ *Щщ* | ъ *ъ* | Ыы *Ыы* | ь *ь* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Вв *Вв* | Гг *Гг* | Дд *Дд* | |
| Зз *Зз* | Ии *Ии* | Йй *Йй* | Кк *Кк* |
| Пп *Пп* | Рр *Рр* | Сс *Сс* | Çç *Çç* |
| Хх *Хх* | Цц *Цц* | Чч *Чч* | Шш *Шш* |
| Ээ *Ээ* | Юю *Юю* | Яя *Яя* | |




Чăваш кĕнеке издательстви

ISBN 978-5-7670-2388-2